*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

86 (2498) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи апрелĕн
21-мĕшĕнче тухма тытăннă

ЭРНЕКУН
2014,
ноябрь, 7

ЧĂВАШ ЕН | ЯЛ-ЙЫШ | КИЛ | ХӲТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ



## КĔСКЕН

**Çĕнĕ Шупашкарта çурт тулашне капăрлатакан плитка туса кăларакан «Экоклинкер» завод хута кайнă. Ăна уçнă çĕре Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хутшăннă. Республика ертӳçи кунта туса кăларакан продукци çĕршывĕпе те урăх çуккине палăртнă.**

**Ноябрĕн 4-мĕшĕнче Халăх пĕрлĕхĕн уявне тата Турă Амăшĕн Хусанти турăшĕн кунне паллă туса республикăн тĕп хулинче Хĕрес йăтса утнă. Шупашкар-Чăваш Епархийĕ йĕркеленĕ мероприятие пин-пин çын хутшăннă.**

**ПАЯН** кун тăршшĕ 8 сехет те 48 минут. Тулли уйăх (01.22)
Халăхра çак кун çут çанталăк та йĕрет тенĕ: çумăр е юр çăвать. Пурне те хĕрхеннĕ. Ку тĕнчерен уйрăлса кайнă тăвансене асăнса макăрнă: килте те, масар çинче те.

**ЫРАН** – Дмитрий кунĕ. Çак кун сивĕ те юрлă пулсан çуркунне те çаплах пулĕ тенĕ. Шурăмпуçĕ хĕрелни – çил тухасса, кантăксем тарлани – сивĕтессе. Çырмасем пăрпа витĕнме пуçланă.

**ВИÇМИНЕ** – Праски кунĕнче – панă сăмаха тытмаллах тенĕ.

# Пĕрлĕхре – пирĕн вăй

Халăхсен пĕрлĕхĕ чи пысăк пуянлăх пулнине çирĕплетсе республикăри хуласемпе районсенче Пĕрлĕх кунне халалланă митингсем иртрĕç. Тĕп уяв вара Шупашкарти Хĕрлĕ тӳремре пулчĕ. Пирĕн халăх тăватçĕр çул каяллах Тăван çĕршывăмăрăн никама пăхăнманлăхне упраса хăварса патшалăх никĕсне çирĕплетни наци астăвăмĕнче çырăнса юлнине палăртрĕç тухса каласакансем. 1612 çулта Дмитрий Пожарский кнеçпе Кузьма Минин ополченец ертсе пынипе Мускава тăшмансенчен хăтарнă. Раççей халăхĕ яланах çирĕп пĕрлĕхпе, пысăк тĕллевсемпе пĕтĕçсе хăйĕн йăлийĕркине манăçа кăларманнипе, ăна асра тытса пынипе, никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхшĕн хăйĕн пурнăçне те шеллеменнипе палăрса тăнă.

Чăваш Енре кăна 128 халăх çынни пурăнать. Эрмен, таджик, узбек, вырăс... пĕр тӳпе айĕнче хирĕçмесĕр, çураçуллă пурăнаççĕ. «Пирĕн вăй – культура тата конфесси нумай енлĕхĕпе пĕрлĕхре», – тенĕ Михаил Игнатьев Чăваш патшалăх оперăпа балет театрĕнче «Чăваш Республикин халăхĕсен этнокультура аталанăвĕ» ятпа иртнĕ «çавра сĕтел» хушшинче. Уяв ячĕпе иттернĕ концертра та республика ертӳçи тĕп шухăша палăртнă: «Пирĕн халăх яланах чун-чĕре ăшшипе, ырă кăмăлĕпе, пулăшма хатĕррипе, пĕршухăшлăхĕпе палăрса тăнă. Пĕрлĕхре – пирĕн вăй».

# Тар юхтарнă пайтах çу каçа, халь канма та юрать сухаçа

**Хресчен вырса илнĕ çичĕ тĕслĕ тырпула кĕлете, пĕрер çимĕçĕн пухнă улмаçырлана нӳхрепе кĕртсе хучĕ. Вылькăхчĕрлĕхе витене хупрĕ. Апла кĕрекере савăнма та юрать. Иртнĕ эрнекун Шупашкарта ял хуçалăхĕпе тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсене чысларĕç.**

Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов пӳлмене ампар виçипе 530 пин тонна ытла тырă кĕнине пĕлтерчĕ, пĕлтĕрхинчен самай ытларах. Гектарти вăтам тухăç – 22,2 центнер.

Килес çулхи тухăçшăн тăрăшса хресчен кĕрхисене 90 пин гектар акса хăварнă, пĕлтĕрхинчен 18 пин гектар нумайрах. Вылăх апачĕлĕх культурăсен лаптăкне те ӳстерсех пыраççĕ. Шел пулин те, кăçал çĕрулмине иртнĕ çулхинчен сахалтарах пухса кĕртнĕ. Çакă унăн лаптăкĕ палăрмаллах пĕчĕкленнипе, ял ĕçченĕсен вăрлăх çитменнипе çыхăннă. Çухатăва саплаштарма, «иккĕмĕш çăкăрăн» сумне тавăрма республикăра тĕрлĕ йышăну тунă. Вăл шутра пахча çимĕç упрамалли 20 хранилище тума палăртни те.

Мĕнпур харпăрлăхлă хуçалăхсенче кăçалхи 9 уйăхра 70 пин тонна аш туса илнĕ, пĕлтĕрхинчен 5,1 процент ытларах. Сĕт суса илесси вара иртнĕ çулхи шайрах юлнă. Сăмах май, кăçал кашни ĕнерен вăтамран 4600 литр сĕт суса илме тĕллев лартнă. Шанăç тӳрре тухасса шанас килет. Ара, «Ольдеевская» агрофирмăпа Елчĕк районĕнчи «Победа» йышши маттур хуçалăхсем пур чухне мĕнле шанмăн-ха. Вĕсенче сăвăма 7 пин килограмран та иртересшĕн.



Сăн ӳкерчĕксене www.cap.ru сайтран илнĕ

Республика ертӳçи Михаил Игнатьев уява пухăннисене саламланă май йывăрлăхсем çинче те чарăнса тăчĕ. «Чăваш Ен çĕрулми туса илессипе Раççейре малтисен йышĕнчеччĕ. Халĕ пирĕнтен иртес текенсем те пур. Иртнĕ çул йĕпе-сапаллă çанталăка пула çĕрулмин пысăк тухăçне пухса кĕртеймерĕмĕр, кирлĕ чухлĕ вăрлăх хывайманăмăр. Малашне çĕрулми туса илекен хуçалăхсене вăйлатмаллах. Вĕсем ура çинче çирĕп тăрсан ĕç укçине ӳстермелли майсем те пулĕç. Çамрăксем хушшинче 10 пин тенкĕпе ĕçлес текенсем çук халĕ».

Чăваш Ен Пуçлăхĕ хальхи вăхăтра ял хуçалăхĕнче туса илнĕ çимĕçĕн сутлăх хакĕ пĕчĕкех маррине, ютран тавар кӳме чарни те хресченшĕн усăллă çеç пулнине палăртрĕ. Апат-çимĕç хатĕрлекен предприятисене тӳрĕ кăмăлпа ĕçлеме, пăсăлнă çимĕçпе усă курса ята яма кирлĕ маррине асăрхаттарчĕ. «Пахалăха ӳстерсен кăна сирĕн продукцине çынсем тупăшсах туянĕç».

Юлашкинчен Михаил Игнатьев агропромышленноç комплексне аталантарас ĕçре пысăк ӳсĕм тунисене наградăсем парса чысларĕ. Раççейĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ята илнисем кăна виççĕн пулчĕç.

Федор Муратовăн «Кĕреке» ятлă сăввинчи йĕркесем асăма килеççĕ:

Тар юхтарнă пайтах çу каçа,
Халь канма та юрать сухаçа.
Çапла пултăр!

Елена НИКОЛАЕВА.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

## Хурлăхан турачĕсем кукăрăлаççĕ

**? Çуркунне хурлăхан тĕмĕсем хăйсен çулçипе савăнтарнăччĕ. Кĕре хирĕç çулçи тăкăнса пĕтрĕ, турачĕсем кукăрăлчĕç, хуппи хуралчĕ. Мĕн пулчĕ-ши?**

Ахăртнех, çăнăхла сывлăм (мучнистая роса) чирĕпе нушаланать. Хурлăханăн çулçи, хунавĕ, çимĕçĕ сиенлет. Ӳсен-тăран çуркуннех чирлет. Çулла çулçăпа çамрăк хунав тата çырла çинче тусан ларнă пек вырăнсем пулаççĕ, кайран вĕсем кĕççеленнĕ вырăн пек курăнма пуçлаççĕ. Йĕпе-сапаллă ăшă çу пулсан чир уйрăмах хăвăрт аталанать. Ытларах чухне чир азотпа ытлашшипех апатлантарнă çӳллĕ тĕмсене, çавăн пекех фосфорпа кали çитменнипе начарланнисене çулăхать.

Кукăрăлнă хунав тăррисене касса çунтармалла. Тăкăннă çулçăпа çырлана пухса çунтармалла. Çакăн хыççăн ӳсен-тăрана фосфорпа кали удобренийĕпе апатлантарса тĕм йĕри-тавра чавмалла.

Тухăça пухса илнĕ хыççăн е çур пуçламăшĕнче (папка çурăличчен) тĕме 3 процентлă бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Чечеке ларса сӳннĕ хыççăн – кальциленĕ сода хушнă шĕвекпе (10 л шыва 30-50 г сода). Çапла – 3-4 хут, кашни 7-10 кунран.

## КИЛ КАРТИ

✓ Качака çăмĕ сăлтавсăрах тăкăнать-и? Апла ăна витаминпа минерал тăварĕсем çитмеççĕ. Çулламалли ятарлă тăвар хурса памалла. Вылăх тăракан витере нӳрлĕ пулсан та качакан çăмĕ тăкăнать.

✓ Лайăх тӳсе ватнă çăмарта хуппине сысна апатне хушса парсан каяшпа пĕрле шĕвĕрĕлченсем те тухĕç.

✓ Çăвăрланă хыççăн кролик ами шыв нумай ĕçет. Читлĕхре шыв пулмасан вăл çурисене çисе яма пултарать. Шыв нумай ĕçекен ама сĕтлĕрех те, çавна май çурисем те хăвăрт ӳт илеççĕ.

✓ Кролик çурине амăшĕпе пĕрле сахалтан та 45 кун тытмалла. Маларах уйăрсан вĕсем япăхрах аталанаççĕ, час-часах чирлеççĕ.

✓ Ĕне талăкне 65 литр таран шыв ĕçме пултарать. Ăна кунне 2-3 хут шăвараççĕ. Сурăхпа качакана кунне 8 литр шыв кирлĕ пулсан, хурпа кăвакала – 1,5-1 литр.

## Шывпа, çутăпа усă курнине палăртма

Раççейĕн строительство тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министерстви ятарлă проект хатĕрленĕ. Унпа килĕшÿллĕн коммуналлă ресурсемпе усă курнине шута илекен приборсем лартман кил хуçисене ытларах укçа тÿлеттерме палăртаççĕ. 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕрĕ ку. Уйрăм счетчиксем лартман граждансене 2015 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 31-мĕшĕччен 30 процент ытларах хушса тÿлеттерĕç; апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен – 60 процент; июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа сентябрĕн 30-мĕшĕччен – 90 процент; октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 2015 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен вара – 2,1 хут ытларах.

## Нумай ача çуратсан

**? Нумай ача çуратса ÿстернисем, çавăн пекех инвалид ачана пăхса пурăнакансем çул çитмесĕрех пенсие тухма пултараççĕ тенине илтнĕ. Тĕплĕнрех ăнлантарса параймăр-ши?**

**Светлана Гурьевна.**

Раççей Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пресс-службин çапла пĕлтерет:

– Пилĕк е ытларах ача çуратса вĕсене 8 çула çитиччен пăхса ÿстернĕ хĕрарăмсем 15 çултан кая мар страхлав стажĕ пухсан 50 çулта пенсие тухма пултараççĕ.

Инвалид ачасене е ачаранпах инвалид шутланакансене 8 çула çитиччен пăхса ÿстернĕ, 15 çултан кая мар страхлав стажĕ пухнă хĕрарăмсем 50 çулта пенсие тухма пултараççĕ.

Инвалид ачасен опекунĕ шутланакан, вĕсене 8 çула çитиччен пăхса ÿстернĕ хĕрарăмсен те çул çитмесĕрех пенсие тухма ирĕк пур.

Икĕ е ытларах ача çуратса ÿстернĕ, Инçет Çурçĕр районĕсенче 12 календарь çулĕнчен кая мар е унпа танлаштарнă вырăнсенче 17 календарь çулĕнчен кая мар ĕçленĕ, 20 çул страхлав стажĕ пухнă хĕрарăмсем тивĕçлĕ канăва иртерех кайма пултараççĕ.

### ХАЛĂХ СĂНАВĔ

Ĕлĕк-авал хăш-пĕр вырăнсенче чÿк уйăхне киремет, çара хĕл уйăхĕ тесе каланă.

Чÿк уйăхĕ урапа тăвармалли, çуна çулĕ хывмалли уйăх.

Кăнтăра каякан кайăксем питĕ çÿлтен вĕçни – юр нумай пуласса, аялтан – сахалтарах.

Ула курак сăмсине çунатти айне пытарни – сивĕтессе.

Хыр-чăрăш йĕкелĕ сахалли – хĕл ăшă пуласса.

Юман йĕкелĕ нумаййи – ăшă та юрлă хĕле.

### КĔСКЕН

**Хальхи вăхăтра республикăра таса ятне каялла тавăрнă 1467 çын тата политика репрессине пула шар курнă 34 çын пурăнать. Реабилитациленĕ çынсене уйăхсерен 2591 тенкĕ хушса тÿлеççĕ, политика репрессине пула шар курнисене – 2307 тенкĕ.**

**Чăвашстат кăтартăвĕсем тăрăх – иртнĕ çулхи январь-сентябрь уйăхĕсенче республикăра 13110 çын çуралнă (2013 çулхи çав тапхăртинчен 92 çын ытларах), 12326 çын вилнĕ (48 çын сахалрах). Пĕтĕмĕшле вара 2014 çулта çуралакансем вилекенсенчен 6,4 процент ытларах пулнă. Çут тĕнчерен вăхăтсăр уйрăлакансен ытларахăшĕ чĕрепе юн тымарĕсен чирĕпе (38,2 процент), шыçă (12), сывлав органĕсен чирĕсемпе (6,9) тата апат ирĕлтерес ĕç (6,3) пăсăлнипе асапланнă.**

### СĔНŸ-КАНАШ

● Карланкăра чĕпĕтме пуçласанах гвоздика пĕрчи илсе пĕр-икĕ минута яхăн чăмламалла та сурса пăрахмалла.

● Целлюлит канăç памасть-и? Апла кунсерен 3-шер курага çийĕр.

● Ват хăмпинче чул пулсан çур стакан шыва 3 кашăк кĕтмел (брусника) сĕткенĕ ярса кунне 2-3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, ĕçмелле.

## Мăйăр усси



Фундук мăйăрĕ атеросклероз пуласран хÿтĕлет, организма тасатма пулăшать, пыршăлăхра апат-çимĕç çĕрессине чакарать, иммунитета ÿстерет.

Мăйăрта пур Е витамин ÿте пиçĕрех те якарах тăвать, вăхăтсăр ваталасран хÿтĕлет.

Ĕмĕртекен амăшĕн рационĕнче фундук пулсан кăкăр сĕчĕ лайăхрах анать.



***Хура пилеш сĕткенĕ юн пусăмне тата юн тымарĕсем хĕсĕннине чакарма пулăшать. Ăна 2-4 эрне таран кунне 3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, 50-шар мл ĕçмелле. Çавăн пекех пилеш çырлине хăйне хальлĕн çиме те юрать: кунне 3 хут, апат умĕн 30 минут маларах, 100-шер грамм.***

### АСРА ТЫТМА

## Çуран утар-и?

**75 çултан каçсан тăтăшах çуран утсан тата темиçе теçетке те пурăнма пулать.**

Кунсерен çуран утма спортсмен пулни кирлĕ мар. Ку таранчен спортпа пачах çыхăнман çын та усă сывлăшра хăйне хальлĕн усăлса çÿреме пултарать. Паллах, урасене аран-аран сĕтĕрсе утмалла тенине пĕлтермест ку. Хăвăртлăх тени кăшт та пулин пулмаллах. Çÿрекен çула тăтăшах улăштарни, çĕнĕ çынсемпе тĕл пулни, усă сывлăш ĕмĕре тăсать. Утни мĕнле чирсенчен хăпма пулăшать-ха?

✓ Кунне пĕр сехет утни кăкăр ракĕ пуласран хÿтĕлет. Тÿрех кун чухлĕ утаймасан малтан çур сехет, кайран тата кăштах утни те лайăх.

✓ Хăвăрт утсан чĕрепе çыхăннă йывăрлăхсенчен хăтăлма пулать. Кунта ним тĕлĕнмелли те çук: кирек епле хускану та чĕре мышцине çирĕплетет. Сăмах май, утни нумайччен те лайăххах.

✓ II типлă сахăр диабечĕпе чирлекенсене профилактика вырăнне кунне 2 пин утăм тума сĕнеççĕ.

✓ 75 çултан иртнисен хушшинче тăтăшах утакансен кун-çулĕ самай вăрăмрах. Мĕн чуль иртерех утма пуçлăпăр, çавăн чуль ытларах пурăнăпăр.

### ШУТА ИЛМЕ



## Çывăриччен шăла тасатар

Шăл эмальне çиекен йÿçеке бактерисем апатланнă хыççăн 2,5-3 сехет таран кăлараççĕ. Çĕр каçипе эпир çиместпĕр те, ĕçместпĕр те, сăмахламастпăр та. 8 сехете яхăн тăсăлакан вăхăтра пирĕн организмра хăйне хальлĕн тасалакан ĕç пулса иртмест. Ирхи апат хыççăн та 3-4 сехет иртмесĕр те çиместпĕр, çапах та кун каçипе эпир калаçатпăр, ĕçетпĕр, апла шăлсем хăйне хальлĕн тасалаççĕ. Çавăнпа çывăрас умĕн тата ирхи апат хыççăн шăла тасатмаллах.

### КАМĂН МĔН ЫРАТАТЬ?

**Вăраха кайнă бронхитран.** 1) 100-шер грамм алоэ (3 çултан кая мар ÿсни), сыснан ăш çăвĕ, услам çу, пыл тата 2 кашăк какао кирлĕ. Аш арманĕ витĕр алоэ кăлармалла. Çăва ирĕлтерсе мĕнпур çимĕçе хутăштармалла. Холодильникра упрамалла. Çур стакан ăшă сĕте ăна 1 кашăк хушса пăтратмалла. Çапла ир-каç туса ĕçмелле. Чылай чухне уссине çийĕнчех туйма пулать.

2) 1 л шыва 2-3 сухан (хуппипех) ярса вăтам çулăм çинче лартмалла. Вĕреме кĕрсен çулăм çинче тата 15 минут тытмалла. Кунне 3 хут ăшăлла пĕрер стакан ĕçмелле. Ăна ĕçнĕ хыççăн 1,5 сехет таран нимĕн те ĕçме-çиме юрамасть. Хăвăра лайăх туйăма пуçличчен сиплемĕр.

**Сунасран тата сăмса шăтăкне полип тухсан.** 1) Эмаль савăта 2 кашăк вĕтетнĕ шĕпĕн курăкĕпе (чистотел) шăши текенекĕ (череда) тата тин вĕретнĕ 400 мл шыв ямалла, япалапа витсе пĕр талăкхăва ăшă вырăна лартмалла. Сăрăхтармалла. Шĕвеке йĕпсĕр шприцпа ĕмтерсе малтан сăмсан пĕр шăтăкне, унтан теприне пĕрĕхтермелле. Шĕвеке холодильникра упрамалла, усă куриччен кăшт ăшăтса илмелле.

2) Стаканăн пĕрре виççĕмĕш пайĕ таран вĕтетнĕ лавр çулçи ямалла, ăна хупламалăх йĕтĕн çăвĕ ямалла. Ăшă вырăнта 2-3 эрне тăрăлантарса лартмалла. Ирпе каçпа ăна сăмса шăтăкне 2-шер тумлам тумлатмалла.

**Шăк тытмасан.** Тин вĕретнĕ 300 мл шыва 1 кашăк эрĕм курăкĕ ярса лартмалла. Кунне 2 хут 150-шар мл ĕçмелле.

**Урана шăнăр туртсан.** Уран пуç пÿрнине тытса хăвăр паталла туртса темиçе çеккунт тытса тăрăр. Шăнăр туртни иртĕ.

**Шăнса пăсăлсан.** Пĕр пек виçепе шур çырли (клюква), хĕрлĕ кăшман, пыл тата шур эрех илсе хутăштармалла. Кунне 3-4 хут, апат умĕн 1 сехет маларах, пĕрер кашăк ĕçмелле.

**Венăсем сарăлса тĕвĕленсен.** 100 мл шур эрехе 2 кашăк чухлĕ вĕтетнĕ сухан хуппи ярса пĕр эрне лартмалла. Сăрăхтармалла, кунне 2-3 хут, апат умĕн çур сехет маларах, 20-шер тумлам ĕçмелле.

**Пыршăлăха паразитсенчен тасатма.** Тин вĕретнĕ 1 стакан шыва 1 кашăк типĕтнĕ бархатцы чечекне ярса тăрăлтарса лартмалла. Кун тăршшĕнче ĕçсе ямалла.

**Пĕвере тасатма.** 1) Каçранах 1 кашăк хура тул çине вĕретнĕ шыв ярса хумалла. Ир енне хура тул шÿсе хăпарать. Ытлашши шыва тăкмалла, унтан кĕрпе çине 1 кашăк олива çăвĕ ярса çимелле. Çакăн хыççăн çăвара 2 сехет таран нимĕн те хыпмалла мар. Çапла 30 кунччен тумалла.

2) Пĕвере тасатма теркăланă 1 кг чĕрĕ кавăн, 2 пысăк лимон (хуппипе) тата 1 стакан шур çырли (клюква) хутăштармалла, 1 кг сахăр хушмалла. Пурне те пĕрле пăтратса банкăна хумалла. Холодильникра упрамалла. Апат умĕн 15 минут маларах 2-шер кашăк çимелле. Çак тутлă хутăш пĕвершĕн кăна мар, пĕтĕм организмшăн аван.

**Пыршăлăх ĕçĕ пăсăлсан, колитран (хулăн пыршăн лăймака сийĕ шыççан), юн тымарĕсене тасатма.** 1 стакан шыва 7 аçтăрхан мăйăрĕн хуппине (е çак мăйăрăн 3 кашăк чухлĕ çурхахне) ярса тĕттĕм вырăнта пĕр эрне тăрăлтарса лартмалла. Кунне 3 хут пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле.

**Гайморитран.** 50 тумлам коньяк, 25-шер тумлам алоэ сĕткенĕпе пуçлă сухан сĕткенне хутăштармалла. Хутăша тĕксĕм тĕслĕ пĕчĕкçĕ кĕленчене ямалла. Сăмса шăтăкне кунне 1 хут пĕрер тумлам ямалла.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*


### РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРŸСЕМ

*СУТАТĂП ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**6. Навоз, торф, чернозем, бой** кирпича, песок, гравмассу с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**20. Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы, **кровля, обшивка** домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам скидки. Т.: 89022881447, 38-75-74. metalservis21.ru

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**53. ОТРУБИ, ЗЕРНО, К/КОРМ.** Д-ка. Т. 89613412236.

**58. Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит, чернозем.** Д-ка. Т. 89276687015.

**77. ТЕПЛИЦЫ** 3х6 – 12000 р., 3х8 – 15000 р. Т. 48-16-54.

**117. ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые окна, железные двери. Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**177. Кирпич** красный одинарный, полуторный, силикатный, облицовочный (все цвета), **половняк, КББ** 20х20х40, 20х12х40, **гравмассу,** керамзит. Доставка. Разгрузка кран-манипулятором. Т.: 44-20-97, 89033582097.

**583. Гравмассу, песок, торф, щебень.** Т. 89050282225.

## КĔСКЕН

**Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче Чăваш Ен ытти тăрăхран эвакуаци йĕркипе куçса килнĕ 70 пин ытла çынна йышăннă, вĕсемшĕн иккĕмĕш кил пулса тăнă.**

**Çĕрпӳ районĕнчи Пысăк Чăрăш ялĕнче культурăпа библиотека аталанăвĕн центрне уçнă. Çуртăн икĕ пӳлĕмне фельдшерпа акушер пӳлĕмĕ йышăнать.**

## СĔТЕЛĔР ТУЛĂХ ПУЛТĂР

### Кавăн пăтти

Кавăн пăтти тутлă та сĕтеклĕ пултăр тесен ăна сийлĕ-сийлĕ пĕçермелле: хулăн тĕплĕ савăта малтан сантиметр хулăнăш теркăланă кавăн хумалла, унтан – çур стакан рис, кавăн, çур стакан вир кĕрпи, кавăн, тăвар. Сĕте кĕрперен 3-4 хут ытларах ямалла, кăшт сахăр хушмалла. Йăваш çулăм çинче е духовкăра пĕçермелле. Услам çупа çимелле.

### Пăшăхланă кролик

**1 кролик тушки, çур купăста пуçĕ, пуçлă 3 сухан, 2 кишĕр, 3 помидор, ешĕл çимĕç, тăвар, пăрăç.**

Кролик тушкине пысăкрах турамсем туса касмалла, сухана çурма ункă туса, кишĕрпе купăстана – улăм пĕрчи евĕр. Суханăн ытларах пайне тарăн çатмана ямалла, тăварпа, пăрăçпа сĕрнĕ какая хумалла, суханпа сапмалла. Унтан сийĕн-сийĕн купăста, кишĕр, помидор, ешĕл çимĕç хумалла. 2 стакан шыв хушса хупăлчапа витмелле, вĕреме кĕртмелле. Çулăма чакарса хатĕр пуличчен пăшăхламалла.

### Йӳçĕтнĕ купăста

**10 кг купăста йӳçĕтме 200 г тăвар, 300 г кишĕр, 15 кашăк чухлĕ сахăр кирлĕ.**

Купăстана турамалла, кишĕре шултра теркăпа хырмалла, тăварпа сахăр хушса сĕткенĕ тухичче алăпа пусса лапчăтмалла. Кастрюле е пичкене чышса тултармалла, йывăр япалапа пусармалла. Пĕр эрне пӳлĕмре лартмалла. Çав хушăра пухăнакан кăпăка пуçтарса тăмалла, вăхăт-вăхăтăн газне кăларма шĕвĕр патакпа савăт тĕпне çитиччен чиксе кăлармалла. Кайран купăстана банкăсене куçарса нӳхрепе антарса лартмалла.

***Купăста тăварлама йодланă тăвар юрăхсăр: унта çимĕç тутипе тĕсне япăхлатакан япаласем пур. Çавăн пекех купăста тăварлама алюмини савăт-сапапа усă курмаççĕ.***

## ПĔЧĔК ВĂРТТĂНЛĂХСЕМ

✓ Кăмпана услам çупа ăшаласан аванрах: тип çу кăмпа шăршине пĕтерет.

✓ Пельменлĕх чуста писĕ пултăр тесен унта 1 кашăк тип çу хушмалла.

✓ Сырник пĕçермелли чустана кăшт тип çу хушсан вăл кăпăшкарах та тутлăрах пулĕ.

✓ Эрехе хăвăртрах сивĕтес тесен нӳрлĕ алшăллипе чĕркесе холодильника хумалла.

✓ Полиэтилен пакета хунă (çăварне çыхмасăр) ыхра холодильникра апрельмай уйăхчен чип-чипер упранĕ.

### Сухан пулăшĕ

Тиртен тунă япаласене килте те çĕнетме пулать. Çурмалла каснă суханпа тир япалана тасатмалла. Суханĕ варалансан ăна сӳхен касса пăрахмалла та малалла тасатмалла.

Вараланнă вырăна теркăланă хуçалăх супăнĕпе нашатырь спирчĕ хушса ăшă шывпа çумалла. Уйрăмах çанă вĕçĕпе çуха хуралать. Япалана ушкăнĕпех йĕпетме кирлĕ мар, пур тире те çума юрамасть-çке. Нӳрлĕ пусма таткипе сăтăрса тасатмалла, типĕтмелле, лимон сĕткенĕпе сăтăрмалла. Йăлтăртатса тăма вара лимон е апельсин хуппипе сăтăрмалла.

## УСĂ КУРМА

### Сывлама çăмăл пултăр

**Пӳлĕмре çакнашкал чечексем пурри сывлăша тасатма, лайăххах сывлама пулăшать.**

**Хлорофитум.** Пӳртре хлорофитум пурри сывлăшри сиенлĕ веществосене – бензол, ксилол, формальдегид, кӳкĕрт йӳçекĕ – сахаллатма пулăшать. Çумалли хатĕрхĕтĕртен тухакан шăрша-марша та туртать вăл. Чечеке çул еннелле тухакан чӳрече ани çине лартсан аванрах.

**Сансевиери.** Сывлăша формальдегидран, туалет-ванна тавраш
не тасатмалли химирен тухакан сиенлĕ япаласенчен тасатать.

**Хризантема.** Чечекре ларнă вăхăтра вăл çилĕм, чернил, тасатакан хатĕрсен шăршине çăтнипе паллă. Лайăх ӳсме чечеке çутă тата усă вырăна лартмалла.

**Бенджамин фикусĕ.** Ӳсен-тăран сывлăша наркăмăшлă япаласенчен тасатса кислородпа пуянлатать. Фикуса кирек ăçта лартма та юрать. Вăл шутра ачасен пӳлĕмне те, мĕншĕн тесен унран нимĕнле аллерги те пулмасть.



Сансевиери



***Помидор çĕнĕ çулччен чипер упрантăр тесен ăна виçĕ литрлă банкăна типĕ горчицăпа (100 г ) хутăш хурса тимĕр хупăлла хупмалла. Холодильника лартмалла.***



**45 çулхи хусах арçын 35-45 çç. хĕрпе е хĕрарăмпа паллашасшăн. Çурт пур. Т. 8-927-856-93-00.**

## АХ, АНЧАХ...

# Мускав хулинче мул хаклă...

– Эрнерен аванс параççĕ, унччен укçа параймăн-ши? – тилмĕрсе пăхать куçран Валя.

– Паллах, – тетĕп хыпаланса сумкăна ухтарма пуçласа. Йăлăнса пăхакан куçсенчен хăвăртрах хăпасчĕ кăна. Телее тенĕ пекех хваттершĕн тӳлеме укçа чиксе тухнăччĕ. Мĕн чухлĕ кирлине ыйтмасăрах пин тенкĕ кăларса паратăп.

– Тавах, тавах, – теме пуçлать Валя. – Ачасене апат çитерме те карточка çинче укçа юлманччĕ. Эрнеренех тавăрса паратăп.

Çич-сакăр çул пĕлетĕп Вальăна. Ачасем пĕр садике çӳренĕ пирĕн. Иксĕмĕрĕн те кĕçĕннисем пĕр класра вĕренеççĕ. Валя университетра кадрсен пайĕнче ĕçлет. Шалăвĕ уйăхран уйăха саплаштарса пымалăх çеç. Мăшăрĕ, Сергей, тăтăшах Мускава çӳретчĕ. Икĕ эрне – ютра, икĕ эрне – килте. Мускавра час-часах ентешĕсене курнине калатчĕ: «Яла миçе кайса та курман вĕсене, унта вара тĕлпулатăн. Пĕрле выляса ӳснисене çеç-и, кӳршĕ ялсенчисене те».

Çапла çӳренĕ, çӳретчĕ Сергей. Халĕ Шупашкар енне маннă. Валя сăмахĕсем тăрăх, Мускавра пĕр пуян хĕрарăм патне киле кĕнĕ вăл. Çавăнпа хĕрхенетĕп те Вальăна. Икĕ ачапа тăрса юлнăскер мĕнле чăтать-ши? Дача туяннăччĕ вĕсем. Мунча та хăпартнăччĕ. Шалта ĕçлемелли юлнăччĕ тетчĕç. Халĕ тин кам туса пĕтерĕ ăна?

Çитмен пурнăçран Мускав çулне такăрлатакан темиçе çынна та пĕлетĕп. Вут çинчи пек пурăнаççĕ вĕсем. Лере кайсан кил шухăшĕ çиет. Киле çитсен мĕн тытса мĕн туса ĕлкĕресси канăçсăрлантарать.

Инçетре ĕçлесе илнĕ вăтăр-хĕрĕх пин тенкĕ киле çитнĕ-çитмен йăпăш юхса тухать те каллех инçе çула тухма хистет. Çапла вĕçĕ-хĕррисĕр. Арăмсем – мăшăрсăр, ачисем ашшĕсĕр нушаланаççĕ.

Республикăра пурăнакансенчен 44 проценчĕ 10 пин тенкĕрен те сахалрах укçа ĕçлесе илнине вуланăччĕ. Ытларах ялтисене пырса тивет пулĕ ĕнтĕ ку. Çав вăхăтрах ялтисен те лайăххах пурăнас, ачисене вĕрентсе çынна кăларас килет. Апла Мускав çути чăваша илĕртме пăрахмĕ-ха. Чулхулапа Хусан хушшинчи аслă çул та вĕсемшĕн çип çапнă пек такăр пулĕ. Çулăн икĕ аййкипе шăкăрин тăрса тухнă шурă хурăнсем çеç кашласа хăйсен юррине юрлĕç:

Ан кай, чăваш, инçе,
ан асаплан.
Тăван ялунтах
тупсам телейне.

**Елена НИКОЛАЕВА.**

## АН ТА КАЛА

# Ивансем

Пĕр пĕчĕкçĕ ялта пилĕк Иван пурăннă. Пĕр-пĕринпе хутшăннă чухне хăшне мĕнле каламаллине те пĕлмеççĕ. Çавăнпа Ивансем хăйсем те тарăхсах çитнĕ. Пĕр каçхине хайхисем картла выляма хурал çуртне пухăнаççĕ. Хăшĕ хăшне чĕннине палăртма хушма ятсем шыраççĕ.

Пĕр Иванĕ теприне:

– Эсĕ шĕвĕр Иван пул, – тет.

– Апла эсĕ кукăрри, – тет тепри.

Виççĕмĕшĕ:

– Шĕвĕрри пур, кукăрри пур, манăн вара мĕнли пулас? – тет.

– Еврей Иванĕ пул, – теççĕ ăна Шĕвĕррипе Кукăрри.

– Мĕншĕн? – ыйтать лешĕ. – Манăн анне еврей мар-çке.

– Çапла, асупа аннӳ чăвашсемех, анчах вĕсем санăн еврейрен те чеерех, – хураллаççĕ Ивансем.

Тепĕр иккĕшне çамрăк Иванпа ватă Иван ят параççĕ. Пысăк ĕç тунă хыççăн хайхисем хушма ята çума хăватли илме кайма пуçтараççĕ. Çав вăхăтра Кукăр Иванăн ĕçпе кукăрăлса ларнă амăшĕ алăка уçса ярать. Пур Ивана та харăсах курса хăраса каять:

– Тем пулман пулĕ те?!

Лешсем:

– Пулнă çав, – теççĕ.

– Мĕн пулнă?

– Ят хутăмăр, çумалла! – теççĕ хайхисем ахăлтатса.

**Клавдия ВИШНЕВСКАЯ.**

---

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, ноябрĕн 10-мĕшĕ**

7.10-8.00 Янра, юрă! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тема дня. (12+) 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.30-12.00 Ялтан яла. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунти кун – эрне кун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, ноябрĕн 11-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 9.10-9.30, 10.10-10.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.30-10.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-11.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 11.30-12.00, 22.30-23.00 Çемье ăшши. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Çĕр сум. (12+) 18.30-19.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 19.30-20.00 На Олимпе. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Юнкун, ноябрĕн 12-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 21.30-22.00 Республика сасси. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 11.10-11.30, 14.10-14.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 9.10-10.00 Женская среда. (12+) 10.30-11.00 Вăрçă ахрăмĕ. (12+) 11.30-12.00 Çĕр сум. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Экономика Чувашии. (12+) 15.30-16.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Кĕçнерникун, ноябрĕн 13-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00, 8.10-8.30, 9.10-9.30, 14.10-14.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 20.10-20.30, 22.10-22.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 22.30-23.00 Республика сасси. (12+) 10.10-11.00 Пĕччен мар. (12+) 11.10-12.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 15.10-16.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 16.10-16.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00, 23.30-24.00 Экстренный час. (16+) 17.30-18.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 18.30-19.00 Путь к здоровью. (12+) 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Студгородок. (12+) 20.30-22.00 Çичĕ юрă. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Эрнекун, ноябрĕн 14-мĕшĕ**

6.10-6.30, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл. (12+) 6.30-7.00 Голос Республики. (12+) 8.10-8.30, 10.10-10.30, 14.10-14.30, 16.10-16.30,18.10-18.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 19.10-19.30 Тема дня. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 11.30-12.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.30-15.00 Çĕр сум. (12+) 15.10-16.00 Пачăшкă сăмахĕ. (12+) 16.10-16.30,17.10-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 16.30-17.00 Социальный вопрос. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Присягая Родине. (12+) 20.10-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Шăматкун, ноябрĕн 15-мĕшĕ**

5.05-6.00 Чĕнтĕрлĕ чаршав. (12+) 7.05-8.00 Женская среда. (12+) 9.05-9.30, 10.05-10.30, 15.05-15.30, 16.05-16.30, 18.10-18.30, 19.05-19.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 9.30-10.00 Рабочая смена. (12+) 10.30-11.00 Чĕрĕлĕх çути. (12+) 11.05-11.30, 15.05-15.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 12.00-12.10 Хыпарсем. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 1 пайĕ. (12+) 15.30-16.30 Мăшăр çунат. (12+) 17.30-18.00 Шурăмпуç. (12+) 18.30-19.00 Ялтан яла. (12+) 19.30-20.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Вырсарникун, ноябрĕн 16-мĕшĕ**

6.05-6.30, 7.05-7.30, 9.05-9.30, 15.05-15.30 Юрă вăчăри. (12+) 6.30-7.00 Юрату авăрĕнче. (12+) 7.30-8.00 Символ веры. (12+) 8.05-8.30, 11.05-11.30, 16.10-16.30, 17.05-17.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 8.30-9.00 Присягая Родине. (12+) 9.30-10.00 Шурăмпуç. (12+) 10.05-11.00 Çичĕ юрă. (12+) 11.30-12.00 Ачалăх урхамахĕ. (6+) 12.05-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.05-15.00 Радиотеатр. 2 пайĕ. (12+) 17.10-18.00 Пĕччен мар. (12+) 18.30-19.00 Сирĕн сад-пахча. (12+) 19.05-20.00 Янра юрă! (хит-парад). (12+) 20.05-24.00 Каçхи микс. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

## ТУНТИКУН, 10

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 3.00 Новости
9.15, 4.20 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 «Сегодня вечером» 16+
14.25, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.30 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.30, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
23.30 «Познер» 16+
0.30 Х/ф «НЕРАССКАЗАННАЯ ИСТОРИЯ США» 16+
1.40 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Последнее дело майора Пронина» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.40 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.40 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
18.00 Концерт, посвященный Дню сотрудника органов внутренних дел Российской Федерации. Прямая трансляция из Государственного Кремлевского Дворца
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
0.45 «ТАСС. Со скоростью света» 12+
1.45 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.30-11.55, 17.40-18.00 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.20 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.25, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Х/ф «ЛЕГАВЫЙ-2» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
0.55 Т/с «НАРКОТРАФИК» 18+
1.45 1.55 «Л.И.Брежнев. Смерть эпохи» 12+
2.50 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

7.00 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.45 Новости культуры
10.15, 1.40 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «МЕГРЭ И ОСВЕДОМИТЕЛЬ»
12.05 Д/ф «Живая вакцина доктора Чумакова»
12.45 Х/ф «МЕФИСТО»
15.10 Academia

## ЫТЛАРИКУН, 11

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.10, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Структура момента» 16+
1.25 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Под властью мусора» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
0.50 «Голубая кровь. Гибель империи» 12+
1.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.30-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 Утренний гость (на чувашском языке)
9.40-9.55 Вспомни, солдат (на чувашском языке)
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.20 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.25, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Х/ф «ЛЕГАВЫЙ-2» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
0.55 Т/с «НАРКОТРАФИК» 18+
1.55 Главная дорога 16+
2.25 Дикий мир 0+
3.00 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «МЕГРЭ И ОСВЕДОМИТЕЛЬ»
12.05, 18.00, 22.45 «Мировые сокровища культуры»
12.20, 20.10 «Правила жизни»
12.50 «Пятое измерение»
13.15, 21.20 Д/с «Космос - путешествие в пространстве и времени»
14.05 Х/ф «КОЗЛЕНОК В МОЛОКЕ»

## ЮНКУН, 12

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.05 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.10 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Политика» 16+
1.20 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+
4.00 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Смертельный друг Р.» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
0.50 Т/ф «Загадки цивилизации. Русская версия». «Тайный код амурских ликов»
1.50 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.30-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.20 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.25, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Х/ф «ЛЕГАВЫЙ-2» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
0.55 Т/с «НАРКОТРАФИК» 18+
1.55 Квартирный вопрос 0+
2.55 Дикий мир 0+
3.05 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «ДЕЛО СЕН-ФИАКР»
12.15 Д/ф «Гиппократ»
12.20, 20.10 «Правила жизни»
12.50 «Красуйся, град Петров!»
13.15 Д/с «Космос. Одиссея в пространстве и времени»
14.05 Х/ф «КОЗЛЕНОК В МОЛОКЕ»
15.10 Academia
15.55 Искусственный отбор
16.40 «Больше, чем любовь»
17.20 «Леонид Коган. Скрипичные миниатюры»

## КĔÇНЕРНИКУН, 13

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.00, 3.00 Новости
9.15, 4.05 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20, 21.35 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00, 3.15 «Мужское / Женское» 16+
17.00, 2.10, 3.05 «Наедине со всеми» 16+
18.45 «Давай поженимся!» 16+
19.50 «Пусть говорят» 16+
21.00 «Время»
23.30 «Вечерний Ургант» 16+
0.15 «Бунт Енисея. Родные берега» 12+
1.20 «Городские пижоны» «Мотель Бейтс» 18+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
9.00 «Сталин против Берии. Мингрельское дело» 12+
9.55 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
22.50 «Вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
0.30 «Химия. Формула разоружения» 16+
1.30 Т/с «УЛИЦЫ РАЗБИТЫХ ФОНАРЕЙ» 16+
3.25 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.30-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.00 ЧГУ-классическое образование для достойного будущего
9.15 В. Яковлев. Полон творческих планов и идей (на чувашском языке)
9.30-9.55 Главные роли. М. Еланова
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.20 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.25, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
20.00 Х/ф «ЛЕГАВЫЙ-2» 16+
22.00 «Анатомия дня»
23.00 Т/с «КРАПЛЕНЫЙ» 16+
1.00 Т/с «НАРКОТРАФИК» 18+
2.00 «Дачный ответ» 0+
3.05 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.30 Новости культуры
10.15, 1.55 «Наблюдатель»
11.15 Т/с «РАССЛЕДОВАНИЯ КОМИССАРА МЕГРЭ». «ДЕЛО СЕН-ФИАКР»
12.15 Д/ф «Джакомо Пуччини»
12.20, 20.10 «Правила жизни»
12.50 «Россия, любовь моя!»
13.15, 21.20 Д/с «Космос - путешествие в пространстве и времени»
14.05 Х/ф «КОЗЛЕНОК В МОЛОКЕ»
15.10 Academia
15.55 «Абсолютный слух»
16.40 Д/ф «Атомная бомба для русского царя. Владимир Вернадский»

## ЭРНЕКУН, 14

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

5.00 «Доброе утро»
9.00, 12.00, 15.00, 18.00 Новости
9.15, 5.25 «Контрольная закупка»
9.45 «Жить здорово!» 12+
10.55 «Модный приговор»
12.20 Т/с «УЛЫБКА ПЕРЕСМЕШНИКА» 12+
14.20, 15.15 «Время покажет» 16+
16.00 «Мужское / Женское» 16+
17.00 «Жди меня»
18.45 «Человек и закон» 16+
19.50 «Поле чудес» 16+
21.00 «Время»
21.35 «Голос» 12+
23.40 «Вечерний Ургант» 16+
0.35 «Городские пижоны» «Неизвестная Мэрилин» 12+
2.35 Х/ф «КОРОЛЕВСТВО» 16+
4.35 «В наше время» 12+

### РОССИЯ 1

5.00 Утро России
8.55 Мусульмане
9.10 «Вызываю дух Македонского. Спиритизм» 12+
10.05 «О самом главном»
11.00, 14.00, 17.00, 20.00 Вести
11.35, 14.30, 17.10, 19.35 Местное время
11.55 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ» 12+
12.55 «Особый случай» 12+
14.50 Вести. Дежурная часть
15.00 Т/с «СЕРДЦЕ ЗВЕЗДЫ» 12+
16.00 Т/с «ПОКА СТАНИЦА СПИТ» 12+
17.30 Т/с «КАМЕНСКАЯ» 12+
18.30 «Прямой эфир» 12+
21.00 Т/с «СЫН ЗА ОТЦА» 16+
22.50 Специальный корреспондент 16+
0.25 Х/ф «СТРАХОВОЙ СЛУЧАЙ» 12+
2.25 Горячая десятка 12+
3.30 Комната смеха

### ЧТВ

6.07-6.10, 6.35-6.41, 11.30-11.55, 17.10-17.30 Вести-Чăваш Ен
7.07-7.10, 7.35-7.41, 8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.10 Телеюрă
9.45-10.05 Точка зрения
11.35-11.55 Вести-ПФО
14.30-14.50, 19.35-20.00 Вести-Чувашия

### НТВ

6.00 «НТВ утром»
8.20 «Прокурорская проверка» 16+
9.35, 10.20 Т/с «ВОЗВРАЩЕНИЕ МУХТАРА» 16+
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
11.55 Суд присяжных 16+
13.30 «Суд присяжных. Окончательный вердикт» 16+
14.45 Обзор. Чрезвычайное происшествие
15.25, 16.30 Т/с «ЛЕСНИК» 16+
18.00 «Говорим и показываем» 16+
19.45 Х/ф «ЛЕГАВЫЙ-2» 16+
23.40 «Список Норкина» 16+
0.30 Т/с «НАРКОТРАФИК» 18+
2.25 Дикий мир 0+
2.45 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
4.40 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00, 15.00, 19.00, 23.20 Новости культуры
10.20 Х/ф «СНАЙПЕР»
11.30 Д/ф «Гончарный круг»
11.40 Д/ф «Александр Попов. Тихий гений»
12.20 «Правила жизни»
12.50 «Письма из провинции»
13.15 Д/с «Космос - путешествие в пространстве и времени»
14.05 Х/ф «КОЗЛЕНОК В МОЛОКЕ»
15.10 «Царская ложа» Галерея музыки
15.50 Х/ф «В ПОГОНЕ ЗА СЛАВОЙ»
17.15 Большая опера
19.15 Смехоностальгия
19.45, 1.55 «Искатели» «Загадка русского Нострадамуса»
20.30 Т/с «НИКОЛЯ ЛЕ ФЛОК. ТАЙНА УЛИЦЫ БЛАН-МАНТО» 16+
22.25 «Линия жизни»
23.40 Х/ф «НЕСПЕЛЫЕ ГРАНАТЫ»
1.15 Российские звезды мирового джаза

## ШĂМАТКУН, 15

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 15.00 Новости
6.10 Х/ф «ДЕЛО □ 306» 12+
8.00 «Играй, гармонь любимая!»
8.45 «Смешарики. Новые приключения»
9.00 «Умницы и умники» 12+
9.45 «Слово пастыря»
10.15 «Смак» 12+
10.55 «Людмила Гурченко. Дочки-матери» 12+
12.15 «Идеальный ремонт»
13.10, 4.00 «В наше время» 12+
14.25, 15.20 «Голос» 12+
16.55 «Ледниковый период»
20.00 Футбол. Отборочный матч Чемпионата Европы 2016. Сборная Австрии - сборная России. Прямой эфир из Австрии
22.00 «Время»
22.20 «Сегодня вечером» 16+
0.00 Х/ф «ПРЕДЛОЖЕНИЕ» 16+
2.00 Х/ф «СЕКСА МНОГО НЕ БЫВАЕТ» 16+
5.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

4.50 Х/ф «АЛЕШКИНА ЛЮБОВЬ»
6.35 «Сельское утро»
7.05 Диалоги о животных
8.00, 11.00, 14.00 Вести
8.10, 11.10, 14.20 Местное время. Вести-Москва
8.20 «Военная программа» Александра Сладкова
8.50 «Планета собак»
9.25 Субботник
10.05 «Моя планета» представляет. «Мастера» «Редкие люди» 12+
11.20 «Честный детектив» 16+
11.55 Х/ф «КАКТУС И ЕЛЕНА» 12+
14.30 Субботний вечер
16.20 Х/ф «КРИВОЕ ЗЕРКАЛО ДУШИ» 12+
20.00 Вести в субботу
20.45 Х/ф «КОГДА НАСТУПИТ РАССВЕТ» 12+
0.40 Х/ф «СЕРДЦЕ БЕЗ ЗАМКА» 12+
2.55 Х/ф «ТОЛЬКО ВЕРНИСЬ» 12+
4.40 Комната смеха

### ЧТВ

8.10-8.20 Вести-Чăваш Ен
10.05 Для вас, любимые. Концерт по заявкам
10.50-11.00 Солнечный зайчик (на чувашском языке)
14.20-14.30 Вести-Чувашия

### НТВ

5.40 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
7.25 Смотр 0+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Золотой ключ» 0+
8.45 «Медицинские тайны» 16+
9.25 «Готовим с Алексеем Зиминым» 0+
10.20 Главная дорога 16+
10.55 Кулинарный поединок 0+
12.00 Квартирный вопрос 0+
13.25 «Я худею» 16+
14.30 «Поедем, поедим!» 0+
15.05 Своя игра 0+
16.15 «Профессия - репортер» 16+
17.00 «Контрольный звонок» 16+
18.00 Следствие вели…16+
19.00 «Центральное телевидение»
20.00 «Новые русские сенсации» 16+
21.00 Ты не поверишь! 16+
22.00 «Хочу к Меладзе» 16+
23.55 «Мужское достоинство» 18+
0.30 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ» 16+
2.25 Дикий мир 0+
3.10 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 Библейский сюжет
10.35 Х/ф «В ПОГОНЕ ЗА СЛАВОЙ»
12.00 Д/ф «Иные берега»
12.45 К 60-летию Юрия Кары. Большая семья
13.40 Пряничный домик. «Костюм русского севера»
14.10 Д/с «Нефронтовые заметки»
14.40 «Березка» - жизнь моя! Концерт в КЗЧ
15.55 Спектакль «ТРУДНЫЕ ЛЮДИ»

## ВЫРСАРНИКУН, 16

### ПЕРВЫЙ КАНАЛ

6.00, 10.00, 12.00, 18.00 Новости
6.10 Х/ф «МАППЕТЫ»
8.10 «Армейский магазин» 16+
8.45 «Смешарики. ПИН-код»
8.55 «Здоровье» 16+
10.15 «Непутевые заметки» 12+
10.35 «Пока все дома»
11.25 «Фазенда»
12.15 «Теория заговора» 16+
13.15 «ДОстояние РЕспублики: Виктор Резников»
15.30 «Черно-белое» 16+
16.30 «Большие гонки» 12+
18.20 «Своими глазами» 16+
18.50 «Театр Эстрады» 16+
21.00 Воскресное «Время»
22.30 «Толстой. Воскресенье» 16+
23.30 Х/ф «НЕРАССКАЗАННАЯ ИСТОРИЯ США» 16+
0.40 Х/ф «МОРЕ ЛЮБВИ» 16+
2.50 «В наше время» 12+
4.05 «Контрольная закупка»

### РОССИЯ 1

5.30 Х/ф «СРОК ДАВНОСТИ»
7.20 Вся Россия
7.30 Сам себе режиссер
8.20 «Смехопанорама» Евгения Петросяна
8.50 Утренняя почта
9.30 «Сто к одному»
10.20 Местное время. Вести--Москва. Неделя в городе
11.00, 14.00 Вести
11.10 «Кулинарная звезда» 12+
12.10 Х/ф «ТОЛЬКО ТЫ» 12+
14.20 Местное время. Вести--Москва
14.30 «Смеяться разрешается»
16.25 Х/ф «МИР ДЛЯ ДВОИХ» 12+
20.00 Вести недели
22.00 «Воскресный вечер с Владимиром Соловьевым» 12+
23.50 «Я смогу!» 12+
2.50 «Вызываю дух Македонского. Спиритизм» 12+
3.50 «Планета собак»
4.20 Комната смеха

### ЧТВ

10.20-11.00 Вести-Чувашия. События недели

### НТВ

6.05 Т/с «ДОРОЖНЫЙ ПАТРУЛЬ» 16+
8.00, 10.00, 13.00, 16.00 Сегодня
8.15 «Русское лото плюс» 0+
8.50 «Хорошо там, где мы есть!» 0+
9.25 Едим дома 0+
10.20 «Первая передача» 16+
11.00 «Чудо техники» 12+
11.50 «Дачный ответ» 0+
13.20 «Профессия - репортер» 16+
14.00, 16.15 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ. СМЕРЧ» 16+
18.00 Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
19.00 «Сегодня. Итоговая программа»
20.10 Х/ф «ПУЛЯ» 16+
21.55 Х/ф «ВОПРОС ЧЕСТИ» 16+
23.50 «Егор Гайдар: Гибель империи» 12+
1.15 Т/с «ДОЗНАВАТЕЛЬ» 16+
3.05 Т/с «ГОНЧИЕ» 16+
5.00 Т/с «СУПРУГИ» 16+

### РОССИЯ К

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Обыкновенный концерт с Эдуардом Эфировым»
10.35 Х/ф «ДЕВУШКА С ХАРАКТЕРОМ»
12.00 Д/ф «Большой» в «Большом яблоке»
12.45 «Легенды мирового кино» Гойко Митич
13.15 «Россия, любовь моя!». «Легенды и были ногайских степей»
13.40 Гении и злодеи. Альфред Нобель
14.10, 1.55 Д/ф «Зог и небесные реки»
15.05 «Что делать?»
15.50 «Пешком...» Москва литературная
16.20 «Искатели» «След Одигитрии»
17.05 «Линия жизни»
18.00 Итоговая программа «Контекст»
18.40 «Романтика романса» В честь Александры Пахмутовой
19.55 К 70-летию Великой Победы. «Война на всех одна»
20.10 Х/ф «МАГАЗИН НА ПЛОЩАДИ»

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 7.11 | 8.11 | 9.11 | 10.11 | 11.11 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Температура, °С | 2-4 сехетре | –1 | +1 | +3 | +1 | 0 |
| | 14-16 сехетре | +2 | +4 | +7 | +7 | +7 |
| Çумăр çăвать | | | | – | – | – |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | 755 | 753 | 758 | 758 | 761 |


## РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

### СУТАТĂП ПРОДАЮ

**618. Косилки,** грабли, **фрезы,** опрыскиватели, **погрузчики** на МТЗ. **ДОСТАВКА!** Тел.: 8-937-955-98-02, 8-937-375-80-95.

**659. ОКНА** и **ПОТОЛКИ.** Немецкое качество. Монтаж по ГОСТу. Д-ка, замер бесплатно. **Пенсионерам скидки.** Т. 89176627164.

**712. Чуптарнă пăру** (Шупашкар р-нĕ). Т. 89279921304.

### ТУЯНАТĂП КУПЛЮ

**332. Бычков, телок, коров, свиноматок.** Т. 89279993737.

**433. Коров.** Т. 89278508564.

### ПУЛĂШУ УСЛУГИ

**32. Лечение алкоголизма.** Анонимно. Консультация бесплатная с 8 до 19 ч., сб., воскр. с 8 до 13 ч. А: Чеб., пр. Ленина, 56. **Т. 552733.**

*Лиц. ЛО 21-01-001 096 от 06.06.2014г. МЗСР РФ. Имеются противопоказания, проконсультируйтесь со специалистом.*

**63. Известный** Чебоксарский **экстрасенс,** маг, хиромант, астролог **Олег Боголюбов** решает многие жизненные проблемы. Т. 89674743783.

**152. Бурение** скважин на воду. Т. 89603021293.

**229. Кровля, обшивка домов.** Гарантия. Скидки. Т. 89276687574.

**513. Чистка колодцев.** Т.8-961-342-90-59.

**660. Утепление домов эковатой.** Профессиональный монтаж. Гарантия качества. Доступные цены. Т. 89196691666.

**644. Юрист.** Т.: 89279985500.

**691. Сварочные работы. Установка** котлов, насосов и др. Т. 89677941676.

### ĔÇ РАБОТА

**703. МОНОЛИТЧИКИ в Москву.** Т.: 8-966-108-22-36, 8-926-686-73-21.

**704.** В Москву срочно **требуются мастера** отделочных работ, **разнорабочие.** З/п от 50 т. р. Работа по трудовому договору. Т. 89637709962 (ООО "СТС").



**«ХРЕСЧЕН САССИ»**
**Обществăпа политика хаçачĕ**
**Индекс 54838**
Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çуртĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – В.В. ТУРКАЙ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакципе издатель адресĕ: Шупашкар, И.Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕп редактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çуртĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла. 17 сехетре алă пуснă.
Заказ 4254
Тираж 20460

* Рекламăпа пĕлтерӳсем. Реклама текстсемпе пĕлтерӳсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.